# Уҫланкӑри палан

*Юрий Сементер*

## I

Филипп Лукин композиторпа чӗрӗк ӗмӗр алла-аллӑн ӗҫлесе, эпир вӑтӑра яхӑн юрӑ ҫыртӑмӑр. Ҫавсенчен чи палли, чи ӑнӑҫли, ман шутпа — «Уҫланкӑри палан» юрӑ. Вӑл, 1983-мӗш ҫулта ҫырнӑскер, ҫийӗнчех республикӑри паллӑ юрӑҫсен репертуарне кӗчӗ. Чи малтан ӑна академи капеллин солистки Тамара Гурьева юрлама вӗренчӗ пулмалла, унтан Чӑваш патшалӑх академи юрӑпа ташӑ ансамблӗн солистки Зоя Лисицына юрларӗ. Халӑх артистки Тамара Чумакова симфони оркестрӗпе пӗрле юрланине пленка ҫине ҫырчӗҫ. Тамара Супонина ҫӗршыври композиторсен черетлӗ съезчӗн концертӗнче шӑрантарчӗ; Алевтина Зинкина Филипп Лукинӑн Мускав консерваторийӗнче ирттернӗ автор каҫӗнче юрларӗ; Зоя Андреева, Зоя Ананьева, Валентина Смирнова, «Илем» ансамбльти Людмила Семенова, Галина Пуклакова, Лидия Толстова тата ытти юрӑҫсем те ҫав юрӑпах сцена ҫине чылай тухрӗҫ. Кашнинчех «Уҫланкӑри палан» юрра хапӑл тӑватчӗҫ, тӑвӑллӑн алӑ ҫупса, юрӑҫисене сцена ҫине чӗнсе кӑларатчӗҫ, икшер хут юрлаттарни те нумай пулнӑ. Ӑна ҫавӑн пекех Чулхулара А.С. Пушкин ячӗпе хисепленекен оперӑпа балет театрӗн солистки Алла Проволоцкая, Киевра украин юрӑҫисем те темиҫе хутчен юрларӗҫ. Нумаях та вӑхӑт иртмерӗ, «Уҫланкӑри палан» халӑхра пурте пӗлекен юрӑ пулса тӑчӗ, ӑна чӑвашӗ, вырӑсӗ, тутарӗ — пурте юратса юрларӗҫ. Халӗ те радиопа телевидени передачисенче вӗҫӗмех янӑрать вӑл. Ун ҫинчен музыка тӗпчевҫисем те, композиторсем те, журналистсем те ырласа ҫырчӗҫ. Эпӗ хам та ҫав юрӑ пирки чылай ҫыру илнӗ. Ҫырӑвӗсем вара Ҫӗпӗртен, Казахстанран, Тюменьрен, Самарпа Пенза тӑрӑхӗнчен, тӗрлӗ ҫӗрти ҫар ҫыннисенчен килетчӗҫ. «Центрти телевидени Чӑваш патшалӑх юрӑпа ташӑ ансамблӗн концертне кӑтартрӗ. Питӗ хӗпӗртесе, хамӑр ентешсен ӑсталӑхӗшӗн чунтан савӑнса итлерӗмӗр. Уйрӑмах Филипп Лукин композиторпа Юрий Сементер поэт ҫырнӑ «Уҫланкӑри палан» юрӑ чӗререн тухма пӗлмест. Питӗ ӑста, чуна пырса тивмелле юрларӗ ӑна ансамбль солистки. Тархасшӑн ярса парсамӑрччӗ пире ҫав юррӑн нотине. Салампа Целиноград хулинче пурӑнакан Григорьевсен ҫемйи». Ҫакӑн пек ыйтусем таҫтан та килетчӗҫ. Филипп Мироновичӑн вара ирӗксӗрех юрӑ нотине Музыка обществи урлӑ пысӑк тиражпа пичетлесе кӑларма тиврӗ, ыйтакансен кӑмӑлне тивӗҫтермелле пулчӗ.

Пирĕн юрă чăваш çыравçисен калавĕсене, пьесисене, очеркĕсене кĕрсе кайрĕ. Зоя Нестерова хăйĕн повеçне «Ан ман, савни, ан ман» ят пачĕ. Владимир Ухли, Валентина Эльби тата ытти çыравçăсен произведенийĕсене те кĕрсе кайрĕ вăл, ăна юрлакан персонажсен хисепне шутласа кăларас çук. Çапла вара юрă хăй вăхăчĕн палли пулса юлчĕ теме пулать. Ĕнтĕ хама та юлташсем хăйсен пĕлĕшĕсемпе тĕл пулсан: «Ку — Юрий Сементер, «Уçланкăри палан» сăввине çыраканĕ», — тесе паллаштарма тытăнчĕç. Ун пек каласан, чăнах та, пурте пĕлетчĕç.

Пĕррехинче, Чăваш академи драма театрĕнче, Сĕнтĕрвăрринчен спектакль курма килнĕ хĕрарăмсем манран «Уçланкăри палан» юрра малалла тăсма питĕ тархасласа ыйтрĕç, юратакан çынсем пĕр-пĕринпе тĕл пулнине çырса кăтартма сĕнчĕç. Çынсем çапла интересленни мана, паллах, шухăшлаттарчĕ, анчах халăхра сарăлнă юрра пăсма-çĕнетме, ун çумне хушса çырма алă çĕкленмерĕ.

Мĕнле çуралнă-ха «Уçланкăри палан» юрă?

Чылай чухне композиторсем юрра хатĕр сăвă, хăйсен чун-чĕрине тыткăнлакан сăвă тăрăх кĕвĕлеççĕ. Шăпах çавăн пек чаплă кĕвĕсем тупма хавхалантарнă та çамрăк чухне Филипп Мироновича Çемен Элемĕн «Тухрăм эпĕ Атăл хĕррине», Иван Ивникăн «Кĕсле», Илле Тукташăн «Шурă роза», Григорий Краснов-Кĕçĕннин «Атăлпала Сĕве хушшинче», Васлей Давыдов-Анатрин «Телейлĕ туслăх», «Савнă тусăма», Валентин Урташăн «Тухăçран хăпарсан шурăмпуç» сăввисем. Анчах тепĕр чухне композитор чунĕнче сăвăсăр кĕвĕ те çуралать. Шăпах çавăн пек кĕвĕ çуралнă та Филипп Лукинăн 1983 çулхи кĕркунне Кăкшăмри пултарулăх çуртĕнче пурăннă чухне. Вăрманта уçăлса çӳренĕ чух тупăннă кĕвве вăл пӳрте кĕрсенех нота тетрачĕ çине çырса хурать. Кайран, хулана таврăнсан, çав кĕвĕ валли сăвă çыртарма шутлать.

Филипп Миронович ун чухне ман пата шăнкăравланине хальхи пекех лайăх астăватăп. Вăл мана çав кĕвве пианинăпа каласа телефонпа итлеттерчĕ, унăн виçи-пусăмĕпе килĕшӳллĕ сăвă çырса пама ыйтрĕ. Юлташсемшĕн кирлĕ чухне эпĕ ытти ĕçе пăрахсах вĕсем ыйтнине пурнăçлама пикенетĕп. Хальхинче те çаплах пулчĕ. Кĕвĕ мана тунсăхлăрах пек туйăнчĕ. Çавăнпа та эп пĕр-пĕр телейсĕр юрату пирки шухăшлама тытăнтăм. Хĕрпе каччă, калăпăр, пĕр-пĕрне чунтан юратаççĕ, анчах вĕсен уйрăлмалла килсе тухать. Çав уйрăлу тунсăхне, хĕр хăйĕн инçетри савнине таса кăмăлпа кĕтсе пурăннине сăнласшăн пултăм эпĕ çав сăвăра. Ку темăпа «Кĕтетĕп», «Килсем, савни», «Тунсăх» тесе çырнă юрăсем ахаль те нумай, хамăн та пур ун пеккисем, çавăнпа та хальхинче çĕнĕлле йĕр тупас килчĕ. Шухăша мĕнле те пулин сюжет урлă кăтартсан аванччĕ, тесе шухăшларăм эпĕ ун чух. Вара юрату туйăмне çут çанталăк пулăмĕсемпе, кĕркунне юр çусан та чăтăмлăн хĕлхем сапса ларакан паланпа çыхăнтартăм. Поэзи саккунĕсем тăрăх пăхсан «Уçланкăри палан» сăвăра кăлтăк-сăлтăк та тупма пулать. Анчах кунта çакна шута илмелле: поэт хатĕр кĕвĕ калăпĕпе ĕçленĕ, çав виçерен тухма май килмен унăн.

Икĕ-виçĕ кунтан Филипп Мироновича телефонпа çĕнĕ сăвва вуласа патăм. Малтан вăл ним чĕнмесĕр итлесе ларчĕ, унтан çырса илчĕ, кĕвĕ пусăмĕсене инструмент умне ларса тĕрĕслесе тухрĕ. Йышăнчĕ. Кĕçех пирĕн çĕнĕ юррăмăр хăйĕн инçе çулне тухса кайрĕ. Унăн сăввине вырăсла Аристарх Дмитриев

куçарчĕ. Юрă темиçе хутчен те пичетленчĕ, кĕнекесене, пластинкăсене, магнит альбомĕсене кĕчĕ, халăхăмăрăн юратнă юрри пулса тăчĕ.

Ăна çырнă чухне композитор çитмĕлреччĕ.

II

«Уçланкăри палан» пирĕн пĕрремĕш юрă пулман. Унччен эпир Филипп Мироновичпа вунă юрă ытла çырнă. Вĕсенчен кашниех, питĕ пысăк пĕлтерĕшлех пулмасан та, хамăрăн юрă искусствинче йĕр хăвармасăр иртмен. «Çĕрĕм-шывăм, Чăваш ен» юрра, калăпăр, пирĕн паллă баритонсем Мефодий Денисов, Петр Заломнов, Виталий Петров килĕштерсе юрларĕç, «Эпир ĕçе тухсассăн», «Паттăр Андриян» тата ыттисем ĕçпе юрă уявĕнче пĕрлештернĕ хор репертуарĕнче пулчĕç, «Уяв юррине» республика юбилейĕ чухне виçĕ профессилле хор — юрăпа ташă ансамблĕ, академи капелли, оперăпа балет театрĕн хорĕ — пĕрле юрласа чаплă концерта уçрĕç. «Ункă шывĕ» тата «Кĕтерне» — чăваш халăх артисчĕн Александр Орловăн юратнă юррисен шутĕнче, «Нумай пулать эсир килменни» юрра Людмила Семенова час-часах халăх çине кăларать, «Эп сана юратса чĕререн» юрра Екатерина Максимова, «Юрату» юрра Виталий Гордеев, «Ан кай, савни» юрра Венера Иванова хăйсен репертуарĕнче чылай вăхăт хушши усрарĕç...

Çапах та хăшĕ пулнă-ха пирĕн чи пĕрремĕш юрă? Вăл — «Ан васка». Ăна Филипп Миронович 1968 çулта кĕвĕлерĕ. Ун чухне эпир, пĕр-пĕрне кăштах курнă пулсан та, çывăх пĕлмен.

Çартан таврăннă хыççăн эпĕ Çĕрпӳ районĕнчи «Октябрь çулĕ» хаçат редакцийĕнче ĕçлеттĕм, унти литература пĕрлешĕвне ертсе пынă май Шупашкар çыравçисемпе тачă çыхăну тытаттăм. Çавна май Çĕрпĕве Александр Алга, Аркадий Эсхель, Илпек Микулайĕ, Иван Малкай, Валентин Урташ, Алексей Воробьев, Петĕр Львов тата ыттисем те çине-çинех пырса çӳретчĕç, вулакансемпе, çамрăк çыравçăсемпе тĕл пулатчĕç.

1968 çулта унта Ваçлей Давыдов-Анатри пычĕ, тĕлпулусем ирттерчĕ. Ĕçрен пушансан вăл мана сăвăсем вуласа пама ыйтрĕ. Эпĕ вуларăм. Пĕр сăввине, «Ан васка» ятлине, Василий Иванович уйрăмах килĕштерчĕ, композиторсене кăтартса пăхăп тесе хăйпе пĕрле Шупашкара илсе кайрĕ. Çавăн хыççăн пĕр-икĕ эрне пек иртсен эпĕ Филипп Лукин композитортан уçă çыру илтĕм. «Сăвву мана питĕ килĕшрĕ, кĕвви те çийĕнчех тупăнчĕ. Япăх мар юрă çуралчĕ пулас», — тесе çырнăччĕ унта. Паллах, эпĕ савăнтăм, мĕншĕн тесен çамрăк чухнехи сăввăм пысăк композитор кăмăлне тивĕçтернĕ. Кĕçех çав юрă эфира тухрĕ. Лирикăллă çепĕçлĕхне кура ăна та нумай солист юрлатчĕ. Вĕсен хисепĕнче — Тамара Чумакова, Зоя Ананьева, Иван Христофоров тата ыттисем. Хальхи шайпа пăхатăп та — чăнах та «Ан васка» сăввăн кĕвĕлĕхĕ пулнă, сăлтавсăр мар асăрханă ăна Ваçлей Давыдов-Анатри, сăлтавсăр мар йышăннă ăна Филипп Миронович:

Ан васка, пикеçĕм, ан васка,
Килелле утмашкăн ан васка.
Чĕрери калас сăмахăма,
Эп ĕлкĕреймерĕм калама,
Ан васка, ан васка, ан васка...

Запасри офицер пулнă май, тепĕр çулне мана каллех çара илчĕç, малтан хĕсметре Германири Нойбранденбург округĕнче тăнăскер, хальхинче эпĕ Атăл тăрăхĕнчи çар округне лекрĕм, рота командирĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ пултăм, пĕр вăхăтра округри «За Родину» хаçатра та вăй-хала тĕрĕслерĕм. Унтан таврăнсан, 1971 çулта, Чăваш кĕнеке издательствин илемлĕ литература редакторĕнче ĕçлеме тытăннă май, Филипп Мироновичпа çывăх паллашрăмăр, çийĕнчех юрă валли çĕнĕ сăвăсем суйласа илтĕмĕр, çавăнтан вара тăршшĕпех пĕрле ĕçлесе пытăмăр.

Маншăн, литературăпа искусство картишне тин кăна ярса пуснă çамрăкшăн, Филипп Мироновичран вĕренмелли питĕ нумайччĕ. Чи малтанах, вăл вăхăта нихçан та уссăр сая ямастчĕ. Кашни сехечĕ кăна мар, кашни саманчĕ шутраччĕ унăн. Композиторсен союзĕн правлени председателĕ пулсан та çынсене чылай чухне килтех йышăнатчĕ вăл. Ĕç пирки тĕплĕн, татăклăн калаçатчĕ, унтан, калаçу вĕçленнине систерсе, ура çине тăратчĕ, йăл кулса алă паратчĕ. Телефонпа та пуш сăмах çаптарас йăла çукчĕ унăн, мĕн кирлине калатчĕ те çийĕнчех сывпуллашса трубкăна хуратчĕ. Эрех-сăра таврашĕнчен яланах пăрăнатчĕ, уяв кĕрекисенчен вăхăтра тухатчĕ, ыттисене ку енĕпе çирĕп тĕслĕх кăтартатчĕ. Пĕррехинче, 1971 çулхи раштав уйăхĕнче, сăвăçсемпе юрăçсен пысăк ушкăнĕ Сĕнтĕр ялĕнче пулчĕ. Ку тăрăхра пурăнакансем пирĕн концерта пысăк хак пачĕç, юлашкинчен хăнана чĕнчĕç. Кĕрекере, кăштах хĕрнĕçемĕн, шăкăл-шăкăл калаçу, унтан юрă-ташă пуçланчĕ. Анчах пирĕн Филипп Миронович сехет çине пăхсах ларнă-мĕн, чанĕ çапсанах пире пурсăмăра та ура çине тăратрĕ. Ун пек тĕслĕхсем пурнăçра сахал мар пулнă.

1988-мĕш çулхине, юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче, кӳршĕллĕ Чулхула облаçĕнче чăваш литературипе искусствин кунĕсем пулчĕç. Эрне ăнăçлă иртнĕ ятпа эпир, Георгий Ефимов, Порфирий Афанасьев, эпĕ «Нижнегородская» хăна килĕнче хамăрпа кӳршĕллех пурăнакан Филипп Мироновича хăнана чĕнес терĕмĕр. Ăна кайса чĕнме мана шăпа тухрĕ.

— Ой, Юра шăллăм, каçар, — терĕ композитор, — эпир эрне вĕçленнине Виктор Ходяшев патĕнче палăртрăмăр. Пĕлетĕн-и, манăн унта вăтăр грама яхăнах ĕçсе пама тиврĕ... Каçар, тăванăм, пыраймастăп... Поэт-тусăмсем те каçарччăр...

Килти лару-тăрура чухне те, уявра-мĕнре те эрех-сăра ĕçнине ырламастчĕ композитор. Ячĕшĕн тенĕ пек çапах та черкке тытатчĕ, тăррине татса паратчĕ. Давыдов-Анатрисем патĕнче чухне студень-холодец таврашне килĕштерсе çиетчĕ.

— Эх, çак Мария Максимовна, апат-çимĕç хатĕрлес енĕпе те, юрлас енĕпе те питĕ пултаруллă вара, — тетчĕ вăл поэт мăшăрĕ çинчен.

Ĕçе лайăх, профессиллĕ шайпа йĕркелемелле, хамăр литературăпа искусство çыннисем пулнине нимĕнле лару-тăрура та манмалла мар, урăх республикăсемпе облаçсенче чухне уйрăмах чăваш ятне çӳлте тытмалла, — çаплаччĕ Филипп Мироновичăн пурнăç саккунĕ. Çав саккуна вăл хăйĕн сакăрвунă çул урлă каçнă ĕмринче пĕрре те пăсман.

Çакна композиторăн кун йĕрки кăна мар, çийĕ-пуçĕ те çирĕплететчĕ. Вăл яланах типтерлĕ тăхăнса çӳретчĕ, ыттисене те çаплах хăнăхтарма тăрăшатчĕ.

— Халăх çине тухнă чухне костюм айĕнчен шурă е çутă кăвак кĕпе тăхăнмалла, тĕс енчен костюмпа çыхăнакан галстук çыхмалла, — тетчĕ вăл.

Çын çинче çеç мар, килĕнче те тирпейлĕччĕ композитор. Тепĕр чухне ăнсăртран, хăйне малтан систермесĕр пырса кĕмелле пулнă чухне те урăхла курман эп ăна.

Культура çыннин яланах культурăллă пулмалла — çак йĕркепе пурăнатчĕ Филипп Миронович.

### III

Мĕнле килеççĕ çут тĕнчене поэтсем, композиторсем, художниксем? Ахăртнех, ку çут çанталăк вăрттăнлăхĕ пулмалла. Талант тени — асамлă япала, вăл мĕнле çул-йĕрпе, мĕнле сукмакпа çӳренине никам та пĕлмест. Шухăшланăши, калăпăр, Красноармейски районĕнчи Шывпуç Чуракасси ялĕнчен Шăхасан тăрăхĕнчи Касаккасси ялĕнчи Хветĕр Куçмине качча кайнă Микулай Укахвийĕ хăй чăваш ятне тĕнче умне çĕклес чаплă поэта Çеçпĕл Мишшине çуратасси çинчен? Паллах, çук. Вĕсем хăйсен йăх-несĕлне малалла тăсакан лайăх хресчен, хуçалăх çынни çуратса ӳстерме ĕмĕтленнĕ. Анчах çӳлти Турă ирĕкĕпе вĕсен ывăлĕ умĕнче кăвак хуппи уçăлнă, çав ача кайран çĕр çинчи тата тӳпери хăватсемпе хăй халăхĕ ячĕпе, халăх элчи шайĕпе калаçакан аслă асамçă пулса тăнă...

Çĕрпӳ уесĕн Çĕньял Чупай вулăсне кĕнĕ Çавалçырма ялĕнчи çĕр ĕçĕпе пурăнакан Мирун пиччепе Анюк аппа та хăйсен тăваттăмĕш ывăлĕ, Хĕлип ятли, пĕтĕм чăваш халăхне, пĕтĕм Раççей халăхне хăйĕн çепĕç юррисемпе савăнтарасса малтанах шутлама пултарайман. Хăйсем ăслă-тăнлă, ĕçчен, тирпейлĕ çынсем пулнине кура ачисем те вĕренме ăнтăлакан, малашлăха пăхакан ачасем пулнă вĕсен. Аслă ывăлĕ, калăпăр, Лев Миронович, çĕнĕрен йĕркеленнĕ Чăваш республикине ертсе пыракансенчен пĕри пулнă, ыттисем те кашниех пĕрлĕхлĕ ĕçре ертӳçĕ-йĕркелӳçĕ пулнипе палăрнă.

Хĕлип мĕн ачаранпах кĕвĕ-çемĕ енне туртăннă. Лайăх юрланă. Чатукассинчи пуçламăш шкулта вĕреннĕ чухне икĕ ял хушшинчи тарăн çырма урлă каçнă чухне те, çуркунне юр шывĕ шăнкăртатса юхнă чухне те, çулла ялтан инçех мар юхса выртакан Ункăра шыва кĕнĕ чухне те музыка асамлăхĕ çинчен шухăшланă вăл. Ишекри тулли мар вăтам шкулта вĕреннĕ чухне вара унăн шухăшĕ татăклăнах çирĕпленсе çитет: сакăр класс хыççăн ниçта та мар, Шупашкара музыка пĕлĕвĕ илме каймалла. Çаплах килсе тухать те унăн шăпи. 1928 çулта вăл музыка шкулĕнче, тепĕр çултан музыка техникумĕнче вĕренме тытăнать. Вĕрентекенсенчен пĕрине, Федор Павлов композитора, Хĕлипĕн ентешĕ теме пулать: вăл çуралнă Патăръел ялĕ Çавалçырмаран ултă-çичĕ çухрăмра кăна. Çапла Федор Павлов, Василий Воробьев, Степан Максимов, Владимир Кривоносов тата ыттисем вĕрентнипе Хĕлип музыкăн анлă çулĕ çине тухать, ятарлă вăтам пĕлӳ илсе Чăваш патшалăх хорĕнче юрлама тытăнать, иккĕмĕш дирижер пулса ĕçлет, хăйĕн малтанхи юррисене кĕвĕлет.

1935 çулта Филипп Лукин Мускаври П.И. Чайковский ячĕпе хисепленекен консерваторин дирижерпа хор факультетне вĕренме кĕрет, Павел Чесноков, Николай Данилин, Георгий Дмитревский профессорсем пек пысăк ăстасем

аллинче ӑс-хакӑл пухать, кӑткӑс хора ертсе пырассин вӑрттӑнлӑхӗсене алла илет. Вӑрттӑнлӑхӗ-асамлӑхӗ тени вара кунта питӗ нумай: пысӑк хорти вуншар сасӑран пӗр кӑмӑла, пӗр тӗллеве пӑхӑннӑ килӗшӳллӗ-гармониллӗ янӑрав туса хумалла, тӗнчери хор культурин ку таранчченхи шкулӗсен ҫул-йӗрне алла илмелле, ҫав аталану шайӗ ҫумне хӑвӑнтан мӗн те пулин хушма тӑрӑшмалла...

Вӑрҫӑ сиксе тухни консерваторин аслӑ курсӗнчи студентсене хытӑ чӑрмантарать. Лукин халӑх ополченийӗн саккӑрмӗш Хӗрлӗ Пресня дивизийӗнче Мускава хӳтӗлет, унтан вӗсене патшалӑх экзаменӗ тытма каялла чӗнсе илеҫҫӗ. Консерваторийӗ ҫав вӑхӑтра Саратова куҫса кайнӑ пулнӑ, Лукинӑн та унта кайса 1942 ҫулта диплом хӳтӗлеме тивет. Аслӑ пӗлӳллӗ ҫамрӑк дирижера Шупашкара чӗнсе илеҫҫӗ, юрӑпа ташӑ ансамбльне ертсе пыма ҫирӗплетеҫҫӗ. 1943 ҫулхи кӑрлач, нарӑс, пуш уйӑхӗсенче ансамбль Калинин фронтӗнче гастрольте пулать, хаяр тӑшмана хирӗҫ юрӑпа ҫапӑҫать. Чун-чӗререн тав туса йышӑнаҫҫӗ салтаксемпе офицерсем чӑваш артисчӗсен кашни концертне, вӗсен ӑшӑ та илӗртӳллӗ юрри-ташшинче Тӑван ҫӗршыв сассине илтеҫҫӗ, ҫӗнтерӳ туйӑмӗпе хавхаланаҫҫӗ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче композитор таланчӗ ҫурхи ҫеҫке пек ешерсе каять: Филипп Лукинӑн ҫӗнӗ юррисене пӗтӗм чӑваш халӑхӗ юрласа ярать. Чӑваш композиторӗн ячӗ Мускавшӑн та паллӑ пулса тӑрать: 1952 ҫулта СССР Патшалӑх премине илме тивӗҫ пулнӑскер, вӑл ҫӗршывври чи паллӑ музыкҫӑсен ретне кӗрет. Унӑн ятне Анатолий Новиков, Серафим Туликов, Платон Майборода, Василий Соловьев-Седой, Назиб Жиганов ячӗсемпе юнашар лартаҫҫӗ. Пурӑна-киле вӑл Раҫҫей халӑх артисчӗ пулса тӑрать, Дагестан республикин искусство тава тивӗҫлӗ деятелӗ ятне илет, ҫӗршывӑн чи сумлӑ орденӗсене тивӗҫет. Унӑн юррисене, хамӑр юрӑҫсемсӗр пуҫне, Мускаври, Киеври, Минскри, Хусанти, Чулхулари, Ӗпхӳри, Ростоври, Петрозаводскри чи паллӑ юрӑҫсем юрлаҫҫӗ. Филипп Лукин хӑй Патшалӑх премийӗсене паракан комиссире ӗҫлеме тытӑнать. Чӑваш искусствин элчи, Раҫҫей искусствин элчи пулса вӑл Германие, Польшӑна, Югославие, Болгарие, Венгрие, Чехословакие, Монголие ҫитет. Ҫаксем пурте унӑн ячӗн, унӑн пурнӑҫӗн, унӑн ӗҫӗ-хӗлӗн пысӑк шайне кӑтартакан пулӑмсем.

Композиторӑн ячӗ-сумӗ тем пек пысӑк пулсан та чунӗ ҫав тери ачаш та ҫепӗҫчӗ. Акӑ 1993 ҫулхи пуш уйӑхӗн 23-мӗшӗнче эпӗ ун патне кӗтӗм, хӑйӗн юбилейӗ вӑхӑтӗнче пичетлесе кӑларма хатӗрленӗ статьяна вуласа патӑм. Унта ҫакӑн пек вырӑн пурччӗ: «Лукинӑн пултарулӑх пахчин чи ырӑ ҫимӗҫӗ вӑл — юрӑ. Сакӑр ҫӗр юрӑ ытла кӗвӗленӗ вӑл хӑй ӗмӗрӗнче. Ҫав юрӑсене сар кайӑкпа танлаштарас пулсассӑн, чӑваш ҫӗрӗнчи кашни сумлӑ сада хӑй ячӗпе пӗрер сар кайӑк валеҫсе пама пултарӗччӗ Филипп Миронович. Ан тив, ҫунат ҫапса шӑрантарччӑр вӗсем пурнӑҫ кӗввине, ҫынсене савӑнтарччӑр, пӗр-пӗрне юратма хавхалантарччӑр...». Ҫак йӗркесене итленӗ чухне Филипп Мироновичӑн икӗ хӑмӑр куҫӗнчен куҫҫулӗ юхса анчӗ. «Эх, ӑҫта-ши пирӗн чӑн-чӑн музыковедсем? Ҫырма тытӑнаҫҫӗ те вара — хӑйсен теорилле «концепцийӗсенче» ҫухалсах каяҫҫӗ, этемӗн чӗрӗ чунне асӑрхамаҫҫӗ. Спасибо, милӑй, спасибо...».

Йӑла-йӗркере вӑл ытлашшипех сӑпайлӑччӗ. Йӑлтӑркка сӗтел-пукан, пӳлӗмсенчи капӑр интерьер илӗртмен ӑна. Пирогов урамӗнче пахча пӳрчӗ те вӑхӑтлӑх лартнӑскер кӑначчӗ унӑн.

Çакă аса килет. Вĕсен хваттерне кĕмелли урамри алăк питĕ кивелсе кайнăччĕ: ăна тĕрлĕ фанера е хĕç тимĕр татăкĕсемпе çичĕ-сакăр çĕртен сапласа пĕтернĕччĕ, вăл кашни уçса хупмассерен чĕтресе-чĕриклетсе тăратчĕ. Эпĕ тĕлĕнеттĕм: ку çуртра пысăк çынсем пурăнаççĕ-çке, мĕнле çакна асăрхамаççĕ-ши, теттĕм. Кунтан Чăваш гимнĕн авторне Герман Лебедев композитора юлашки çула ăсатнă, икĕ-виçĕ çул каялла Чăваш халăх поэчĕн Çемен Эльгерĕн мăшăрне Евдокия Алексеевнăна ăсатрăмăр, çак хăлтăр-халтăр алăк мана ун чухне те шухăшлаттарнăччĕ. Мĕншĕн нихăшĕ те çурт-йĕр кантурне кайса алăк улăштарас ыйтăва хускатмасть-ши, теттĕм эпĕ. Композитор сакăрвуннă тултарас умĕн чăтаймарăм вара, хула мэрĕ патне кайса: «Филипп Лукин патне юбилей кунĕсенче Мускавран Тихон Хренников килме пултарать, унччен çав алăка йĕркене кĕртесчĕ», — тесе каларăм. Мĕн тейĕн, пырса юсарĕç. Анчах хальхинче те алăка сăрлама «тавçăраймарĕç», хăлăпне вĕрен шалчи пек вăрăм пăтапа çапса тепĕр енчен килпетсĕррĕн кукăртса лартрĕç.

— Эсĕ тутартăн-и вара ăна? — терĕ Филипп Миронович, алăк вăрттăнлăхĕ çинчен каласа панă хыççăн.

Искусство ĕçĕпе, искусство шухăшĕпе пурăнатчĕ Филипп Миронович. Музыка штабĕ пек туйăнатчĕ ун хваттерĕ. Кам кăна кĕрсе тухмастчĕ пулĕ унта кун каçиччен: юрăçсем, дирижерсем, культура ĕçне йĕркелесе пыракансем, çамрăк композиторсем, поэтсем... Шутлатăн та — тĕлĕнетĕн: республикăри музыка ăстисем — пурте тенĕ пекех унăн вĕренекенĕсем. Юрий Васильев, Валерий Важоров, Петр Федоров дирижерсем, Тамара Чумакова, Зоя Ананьева, Виталий Петров юрăçсем, ытти вуншар та çĕршер музыкçă паян хăйсене Филипп Лукин вĕренекенĕсем тесе шутлаççĕ, ăна тав туса асăнаççĕ.

## IV

Ентешлĕх туйăмĕ тесен, вăл Филипп Миронович чунĕнче яланах Çавалçырма васанĕнчи вăйлă çăлкуç пек тапса тăратчĕ. Çавал, Шетмĕ, Ункă тăрăхĕнчи тăван ялсен шăпипе, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе, пурнăçĕпе куллен интересленетчĕ вăл. Аслă Канаш депутачĕ пулнă май, яланах ертсе пыракан органсенче тăнă май вăл тăван районăмăра уйрăмах çывăх куратчĕ. Чатукассинче, Кĕçĕн Шетмĕре, Пикшикре вăтам шкулсем уçма май килнĕшĕн чунтан хĕпĕртетчĕ вăл, кашни культура çурчĕ лартмассерен савăнса калаçатчĕ. Калăпăр, Васлей Давыдов-Анатри поэтпа пĕрле темиçе çул каялла Пикшик шкулне çитсе курни, Николай Карлин ертсе пыракан ансамбле итлени ун кăмăлне питĕ çĕкленĕччĕ.

Тырă-пулă тухăçĕ мĕнлерех хамăр енчи колхоз-совхозра, ачасемпе ватă çынсем хăйсене епле туяççĕ, вăйпитти халăхăн чун-чĕре шайлашăвĕ мĕнле, — çак ыйтусем канăç памастчĕç ăна. Пур çĕрте те социаллă тĕрĕслĕх валли çул уçас, çав ĕçре музыка, поэзи, культура пĕлтерĕшне ӳстерес ĕмĕт-тĕллевпе пурăнатчĕ вăл.

Пирĕн тăрăхра Филипп Лукин çитсе курман хуçалăх çук. 1956-мĕш çулччен юрăпа ташă ансамбльне ертсе пынăскер, вăл хăйĕн коллективĕпе Именкассипе Алманч хутлăхĕнче те, Упи тăрăхĕнче те, Карай енче те çӳренĕ, хăйсен тавралăхĕ пирки каламăпăр та. Унта вăл уйрăм концерт ушкăнĕсемпе те пыра-

пыра кайнӑ. Ҫамрӑкрах чухне ӗҫпе юрӑ уявӗсем ирттерме те кашни ҫул тенӗ пекех пынӑ вӑл Красноармейскине.

Питӗ шел, анчах хӑш чухне, вырӑнта ларакан уйрӑм ҫынсен явапсӑрлӑхне пула, хисеплӗ те сумлӑ ентешӗмӗре те тивӗҫлипе кӗтсе илейместӗмӗрччӗ. 1990 ҫулта, нарӑс уйӑхӗнче, эпир пысӑках мар йышпа Янкас ялне шефла тӗлпулӑва кайса курас терӗмӗр, ҫӗнӗ Культура ҫуртне хута янӑ май ял халӑхне Шупашкарти искусство ӑстисен пултарулӑхӗпе паллаштарас терӗмӗр. Филипп Миронович та, ҫулӗпе ҫитмӗл ҫиччӗре пулин те, пыма килӗшрӗ.

— Ма пырас мар, пырас. Нестер Янкаса лайӑх пӗлнӗ, ун сӑввисемпе юрӑсем те ҫырнӑ. Тата Культура ҫуртӗнче ӗҫлекен Геннадий Правдина та музыка училищинче хам вӗрентнӗ. Унсӑр пуҫне, Янкас ялӗнче пӗлӗш-хурӑнташ та пур пирӗн. Кайса килер, — терӗ ырӑ шухӑшпа хавхаланнӑ композитор. Пирӗнпе пӗрле ҫавӑн пекех Раҫҫей тава тивӗҫлӗ артисчӗ, Кӗҫӗн Шетмӗ ачи Виталий Петров, чӑваш халӑх артистки Зоя Лисицына, ҫамрӑк композитор Родион Петров, Георгий Максимов конферансье пычӗҫ.

Ҫула тухас умӗн икӗ-виҫӗ кун малтан ял Совечӗн председателӗпе тӗлпулу пирки лайӑхах калаҫса татӑлтӑмӑр. Колхоз ертӳҫи вӑл вӑхӑтра отпускраччӗ, путевкӑпа кӑнтӑр енне кайнӑччӗ.

Ҫула май район администрацийӗн ҫуртне кӗрсе тухрӑмӑр. «Унта пӗлеҫҫӗ, сире кӗтеҫҫӗ», — терӗҫ пире. Кайрӑмӑр хайхи. Ҫитсе чарӑнтӑмӑр — Культура ҫуртӗнче ҫутӑ ҫук. Алӑксем хупӑ. Юрать, кӑштах тӑрсан пӗр кинеми пырса тухрӗ. Вара кунта ӗҫлекенсене чӗнтерме тиврӗ.

— Пире никам та нимӗн те пӗлтермен-ҫке, — хыпӑнса ӳкрӗ Геннадий Правдин.

Эпир ҫапах та халӑхпа курса калаҫасах терӗмӗр, вырӑнти радиоузелпа Шупашкартан концерт ушкӑнӗ килсе ҫитни ҫинчен пӗлтертӗмӗр. Ҫур сехет ытларахран янкассем ҫеҫ мар: ҫӗньялсемпе хӗлеҫсем те, йӗкӗтсемпе чаканарсем те пухӑнчӗҫ. Ял Совечӗн пуҫлӑхӗсем ҫеҫ курӑнмарӗҫ.

Тӗлпулу калама ҫук кӑмӑллӑ иртрӗ. Халӑх Филипп Лукин композитор юррисене, хӑй тухса калаҫнине ӑшпиллӗн йышӑнчӗ. Вунпӗр сехет ҫитеспе тин тапранса тухрӑмӑр Янкас ялӗнчен.

Ҫав куна эпӗ кашнинчех Филипп Миронович умӗнче, унӑн чыслӑ та сумлӑ ячӗ умӗнче аванмарланса аса илетӗп. Вӑл унта эпӗ чӗннипе, мана шанса пычӗ, эпӗ вара ӑна ҫутӑ ҫутман Культура ҫурчӗ умне, хупӑ алӑк умне кӑна илсе пыма пултартӑм. Вырӑнти ҫынсен ентешлӗх туйӑмне шанса чей те ӗҫтерейменӗм, ҫур талӑк выҫӑ тытрӑм. Каҫар, Филипп Миронович. Каҫар.

Филипп Мироновичӑн сакӑрвунӑ ҫулхи юбилейне хӑй ҫуралса ӳснӗ Ҫавалҫырма ялӗнче мӗнле ирттерни вара пире пурсӑмӑра та килӗшрӗ. Шупашкар хӑнисене район чиккинче кӗтсе илни, ялти хӑйсен килӗ умӗнчи ешӗл айлӑмра эстрада йӗркелени, парашютҫӑсен ушкӑнне чӗнни, композиторӑн тӑван килне уяври пек тирпейлени — пурте кӑмӑллӑ, пурте милетлӗ. Музыка ветеранӗ хӑй те парӑмра юлмарӗ. Паянхи укҫа ҫине куҫарса шутласан, ҫавӑн чухлӗ чаплӑ артистсем хутшӑннӑ пысӑк концерт мӗн хакне ларнӑ пулӗччӗ-ши, — шутласа та кӑларас ҫук.

Район делегацийĕ композиторăмăрăн юбилейне Шупашкарти оперăпа балет театрĕнче палăртнă чухне те хăйне тивĕçлĕ шайра кăтартрĕ. Çапла пулмалла та: район çынни ирĕкре хăй çĕр-шывĕн чысне çĕклет пулсан, çĕрĕ-шывĕ те хăйĕн ывăлĕ-хĕрĕн ячĕпе сумне ӳстерет. Кунашкал тĕслĕхсем нумай. Калăпăр, Пушкăрт çĕрĕнчи Слакпуç ялĕ Константин Ивановпа Ухсай Яккăвне çуратса ӳстерчĕ, халĕ вара Ивановпа Ухсай ячĕсем Слакпуç ятне-сумне тĕнче шайне çĕклеççĕ.

...Ĕнтĕ пирĕн Филипп Миронович хăй мĕн тума пултарнине турĕ. Халĕ вăл çав юрăсенче пурăнать. Иртĕ вăхăт, эпир те, унăн тусĕ-юлташĕсем, вăл кайнă çулпа кайăпăр, анчах унăн асамлă хăвачĕпе çунатланнă кĕвĕ-çемĕ çĕнĕрен те çĕнĕ ăру чун-чĕрине ĕмĕрлĕх кĕрсе вырнаçĕ, çапла ламран лама вĕçĕ те хĕррисĕр куçса пырĕ.

Умăмра каллех — оперăпа балет театрĕнчи юбилей саманчĕсем. Филипп Миронович хăйĕн ĕçне-хĕлне хак паракан ăшă сăмахсене итлет, уяв парнисем йышăнать. Акă саламлакансенчен пĕри, Юрий Плотников сăвăç, композитора йăмăх хĕрлĕ палан туратти тыттарчĕ. Ку — «Уçланкăри палан» юррăршăн пултăр, терĕ вăл. Юбилярăн икĕ куçĕнче залри çынсемшĕн палăрман çиçĕм çиçсе илчĕ...

V

1994 çул, нарăсăн 3-мĕшĕ. Эпир «Ялав» журнал редакцийĕнче Красноармейски районĕн ячĕпе тухас кăларăм проспектне хатĕрлеме пикентĕмĕр. Район çыннисем те пур. Çав вăхăтра пирĕн фотожурналист Виталий Исаев пăлханчăклăн пырса кĕчĕ, хăйĕнчен республика хаçачĕсем Ф.М. Лукин некрологĕ валли сăн ӳкерчĕксем илсе кайни çинчен пĕлтерчĕ. Эпир те тӳрех хыпăнса ӳкрĕмĕр. Хыпара тĕрĕслесе пăхас тесе Культура министерствине шăнкăравларăмăр. Хăрушă хыпар çирĕпленчĕ. Куç умне çав самантра икĕ «3» тухса тăчĕç: виççĕмĕш числара çуралнă, виççĕмĕш числара вилнĕ... Композитор ирхине 7 сехет те 30 минутра Республика больницин реанимаци уйрăмĕнче вилсе кайнă. Каçхине вара Филипп Миронович килĕнчеччĕ ĕнтĕ. Эпир вĕсем патне хамăр ентешпе, Ял хуçалăх институчĕн проректорĕпе Александр Григорьевич Ванифатьевпа кĕтĕмĕр. Çĕнĕ костюмпа, чăлт шурă кĕпепе, хура галстукпа выртатчĕ композиторăмăр сĕтел пек сарлака тенкел çинче. «Акă ĕмĕрĕн юлашки сакки» — вĕлтлетсе илчĕ пуçăмра шухăш. Канма выртнă пек выртатчĕ пиччемĕр: сăнран пăхма пур енĕпе те чĕрĕ чухнехи пекехчĕ, пĕр-пĕр уяв чухнехи майлă хитре те тасаччĕ. Анчах тавраллах — пуç кăшăлĕсем: Аслă Канашран, Министрсен Советĕнчен, Культура министерствинчен, пултарулăх союзĕнчен, филармонирен, музыка училищинчен, ентешсенчен, ĕç коллективĕсенчен...

— Мĕн юлашки кунччен ĕçлерĕ. Ваçлей Давыдов-Анатри, Людмила Смолина сăввисемпе çĕнĕ юрăсем кĕвĕлерĕ. Чи юлашки юрри — сан сăввупа çырнă «Чăвашах çĕршывĕн пикисем» юрă пулчĕ, пианино çинчех юлчĕ, — терĕ композитор мăшăрĕ Зинаида Михайловна, паллă юрăç, Чăваш республикин тава тивĕçлĕ артистки.

Пуçăмра виçĕ-тăватă кун каялла Филипп Мироновичпа иксĕмĕр телефонпа калаçни çĕнĕрен тĕвĕленчĕ.

— «Чăвашах çĕршывĕн пикисем» юрă питĕ çепĕç кĕвĕллĕ пулса тухрĕ, — терĕ вăл. Унтан, телефон кĕпчекне пианино çине хурса, хăй çĕнĕ юрра пĕтĕмпех юрласа тухрĕ. Çакна каласа пачĕ:

— Икĕ вариант тума тиврĕ. Малтанхине Зинаида Михайловна кăткăс тесе пăрахăçларĕ. Хам та килĕшрĕм вăл каланипе. Халь иккĕшне танлаштарса пăхатăп та — тĕрĕсех каланă вăл. Иккĕмĕшĕ ăнăçлă пулса тухрĕ. Кĕçех аккомпанементне туса çитеретĕп те — солистсене паратăп. Сопраносене сĕнсе пăхас пулĕ-ха... Саламлатăп сана çĕнĕ юрă çуралнă ятпа, сăввушăн тав тăватăп...

— Татах ĕçлĕпĕр-ха, татах çырăпăр, — тесе юлтăм эпĕ.

Анчах çакă пирĕн чи юлашки калаçу пулчĕ. Ун хыççăн пĕр-ик кунтанах композитор хăйне начар туя пуçланă, пульница лекнĕ, унта та хăтарса хăварма май килмен ăна.

Юлашки çула ăна нарăсăн пиллĕкмĕшĕнче, шăматкун ăсатрăмăр. Филармони вестибюльне вырнаçтарнăччĕ унăн тупăкне. Халăх, халăх, халăх... Хисеплĕ хуралта тăтăмăр, юрăпа ташă ансамблĕпе капелла хăй умĕнче унăн юррисене юрласа сывпуллашрĕç, хурлăхлă митинг пулчĕ.

Урамра сивĕ вăтăр градус урлă каçнăччĕ, çил çуккипе кăна нарăс кăралăхĕ ытлашшиех сисĕнместчĕ. Халăх Богдан Хмельницкий урамĕнчи масар çинче те, паллă çынсене пытарнă ретре, питĕ нумай пулчĕ. Каллех митинг, каллех сывпуллашу сăмахĕсем. Эпĕ те калаçрăм.

Унтан тупăка антартăмăр, мачча хутăмăр, тăприне витрĕмĕр, вăхăтлăх палăка вырнаçтартăмăр, христиан йĕркипе вилтăпри тавра, хĕвеле хирĕç утса, виçĕ хут çаврăнтăмăр. Юлчĕ пирĕн Филипп Миронович, юлчĕ вуншар та вуншар пуç кăшăлĕ...

Асăну апачĕ педагогика институчĕн «Сарпике» столовăйĕнче пулчĕ. Апатлану тилхепине тытса пыраканĕсем республикăри культура министрĕ В.П. Иванов тата хула администрацийĕн пуçĕ Л.Е. Смирнов пулчĕç. Тимофей Фандеев композитор, музыка училищин директорĕ Михаил Беляков юрăç, Чăваш халăх поэчĕ Васлей Давыдов-Анатри, Красноармейски районĕнчи «Герой» колхоз председателĕ Владислав Лукин тата ыттисем те чунтан килекен ăшă сăмахсем каларĕç.

Ним тума та çук: çĕр çине килтĕн пулсан — хăçан та пулин каймаллах. Килнипе кайни хушшинчи ĕмĕре этем чыслă ĕçĕпе, пархатарлă шухăш-кăмăлпа irrтерет пулсан — чыс та хисеп вăл çынна. Енчен те çав этем хăйне пилленĕ çут çанталăк пархатарне кура пĕтĕм халăх ĕçне кӳлĕнет пулсан — вăл хăй халăхĕн историне кĕрсе юлать. Чăваш халăхĕн шăпах çавăн пек ывăлĕсенчен пĕри пулнă та Филипп Миронович Лукин — Раççей шайĕнчи композитор, общество ĕçченĕ, пысăк чунлă çын.

Тухăçран кунсерен шурăмпуç хăпарĕ. Çавал, Шетмĕ, Ункă шывĕсем Атăл енне васкаса юхĕç. Хăй мехелĕпе чăваш паланĕсем çеçкене ларĕç, хĕвелпе çĕр пархатар кӳнипе хĕл сиввине тӳсекен кĕрпеклĕ те сиплĕ çырлана çаврăнĕç. Кунпа каç ылмашăвĕнче, ĕмĕрпе ĕмĕр черетленĕвĕнче чĕрĕ аталану хĕлхемĕ пулса пурăнĕç Филипп Лукин юррисем.

1994 çул, ака уйăхĕн 3-мĕшĕ.

Тăван Атăл, 1994. № 8. С. 47–51.
Первый вариант напечатан в районной газете «Ял пурнăçĕ» от 1–16 июня 1994 г. под тем же названием.